Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

72 (7926) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи сентябрь (авăн) уйăхĕн 17-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Президента ыйту парăр

Чăваш Енре пурăнакан кашни çынах республика пуçлăхне Михаил Игнатьева ыйту пама пултарать. Ку енĕпе ятарлă проекта «Чувашия» патшалăх телерадиокомпанийĕ йĕркелет. Республикăри хуласемпе районсенче пурăнакансем Президента хăйсене интереслентерекен кирек епле темăпа та ыйтусем пама пултараççĕ. Республика пуçлăхне панă ыйтăва телерадиокомпанин форумĕнче хăварма пулать. Михаил Игнатьев вĕсем çине тулли хуравсем парĕ.

«Президента – ыйту» пĕрремĕш программа эфира «Россия–1» телеканал çинче сентябрĕн 25-мĕшĕнче тухать. Сентябрĕн 26-мĕшĕнче передачăна «Россия–24» телеканал çинче пăхма май пулĕ. Çав кунах передачăна «Чăваш радио» та эфир хумĕ çине кăларĕ.

## Фермăна хĕле хатĕрлессипе тимлеççĕ



*Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕ – кашни хуçалăх экономикинех тĕреклетмелли тĕп çул-йĕр. Иртнĕ кунсенче дезинфекциленĕ тата шуратса хăт-илем кĕртнĕ Çĕньял Шурчари сысна ферминчи («Герой» хуçалăх) пĕр сарайĕнче паян юсав ĕçĕсем тулли хăватпа пыраççĕ. Эсир сăн ӳкерчĕкре çак ĕçре тимлекен Анатолий Осиповна Валерий Ярусов (сулахайран сылтăмалла) строительсене куратăр.*

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Смотр-конкурс

## Муркашсем каллех малта

Республикăра çулленех ялсене тирпей-илем кĕртессипе смотр-конкурс йĕркелеççĕ. Кăçал унăн итогĕсене республикăри смотр-конкурс итогĕсене пĕтĕмлетекен ведомствăсем хушшинчи комисси ларăвĕнче пĕтĕмлетнĕ. Лару ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов та хутшăннă.

Республикăри смотр-конкурса иртересси пирки кăçалхи май уйăхĕнче пĕлтернĕ. Унта хутшăнма Чăваш Республикин Градостроительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин министерствине материалсене Муркаш ял тăрăхĕ те тăратнă.

«Чăваш Республикинчи ялсене симĕслетесси тата тирпей-илем кĕртесси» номинацире район центрĕ пулса тăракан Муркаш ялĕ 2-мĕш категорипе 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. 2-мĕш вырăна Елчĕк районĕнчи Патреккел ялĕ. 3-мĕш вырăна комисси членĕсем Çĕрпӳ районĕнчи Çĕрпӳ хулине пама йышăннă.

Çавна палăртма кăмăллă. Муркаш ялĕн урамĕсем çулран çул илемлĕрех те илемлĕрех. Çуркунерен тытăнса кĕрхи кунсемччененех урамсенче тĕрлĕ тĕслĕ чечексем куçа илĕртеççĕ. Муркаш урамĕсенче вара чечексем 2008 çулта, районта Республика кунне ирттернĕ чухне ешерме тытăнчĕç. Çавăн чухнех ĕнтĕ ялсене симĕслетес тата тирпей-илем кĕртес енĕпе ирттерекен республикăри смотр-конкурсра Муркаш ялĕ районсем хушшинче 1-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ.

Çавăнтан тытăнсах чечексем кунта пурăнакансен тата хăнасен куçĕсене тыткăнлаççĕ. «Чечексемпе хăтлăрах та илемлĕрех. Вĕсемсĕр малашне май çук та ĕнтĕ»,– теççĕ район центрĕнче пурăнакансем хăйсем те.

Урамсенче йĕркелĕ те хăтлă пултăр тесе тăтăшах субботниксем ирттерессине йĕркене кĕртнĕ. Унта шкул ачисене, предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсене, ялта пурăнакансене явăçтараççĕ.

**Хамăр инф.**

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

## Ĕç тупма пулăшаççĕ

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче районта хăйсен ачисене 3 çулччен пăхса пурăнакан отпускри тата 2011 çулта ĕçе тухма хатĕрленекен амăшĕсене вĕрентессипе йĕркеленĕ. Вĕренĕве ĕç паракансемпе ĕç хутшăнăвĕсенче тăракансемпе «АСБУ 1С: 8.2 Предприяти» специальноçпе ирттереççĕ. Ĕç паракансен заявкисене шута илсе районти ĕçпе тивĕçтерекен центр хĕрарăмсене професси тĕлĕшĕнчен хатĕрлессине йĕркеленĕ.

Вĕренӳ тапхăрĕнче курссене çӳрекенсем асăннă специальноçпе теори тата практика хăнăхăвĕсене илеççĕ. Вĕрентӳ ĕçне Чăваш Енри ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин «Аспект» вĕрентӳпе методика центрĕ хушма професси вĕрентĕвĕн автономи учрежденийĕн преподавателĕсем ирттереççĕ. Вĕренӳ тапхăрĕ пĕр уйăх çурăна пырать. Вĕреннĕшĕн тӳлемелле мар. Ĕçпе тивĕçтерекен центр вĕренекенсене стипенди тӳлет тата çул укçи тăкакĕсене саплаштарать.

Суйлав

## Суйлава 7 парти хутшăнать

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ сентябрĕн 2-мĕшĕнче 878 № йышăну тунă. Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне 2011 çулхи раштав уйăхĕн 4-мĕшĕнче ирттерме палăртнă.

Федерацин 2001 çулхи утă уйăхĕн 11-мĕшĕнчи «Политика партийĕсем çинчен» 95-ФЗ № саккунĕн 36-мĕш статйин 2-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне хутшăнма ирĕк пур политика партийĕсен, çавăн пекех политика партийĕсен Чăваш Республикин территорийĕнче регистрациленĕ регион уйрăмĕсен списокне çирĕплетнĕ.

**Политика партийĕсем:**

1. Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕ.
2. «Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕ» политика партийĕ.
3. «Раççейри либерал-демократсен партийĕ» политика партийĕ.
4. «Раççейри демократсен «Яблоко» пĕрлештернĕ партийĕ» политика партийĕ.
5. «Раççей патриочĕсем» политика партийĕ.
6. «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей» политика партийĕ.
7. Пĕтĕм Раççейри «Тĕрĕс ĕç» политика партийĕ.

**Политика партийĕсен регионти уйрăмĕсем:**

1. Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕ.
2. «Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ.
3. «Раççейри либерал-демократсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕ.
4. «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей» политика партийĕн Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕ.
5. «Раççейри демократсен пĕрлештернĕ «Яблоко» партийĕ» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕ.
6. «Раççей патриочĕсем» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕ.
7. Пĕтĕм Раççейри «Тĕрĕс ĕç» политика партийĕн Чăваш Республикинчи регион уйрăмĕ.

Асăннă списока Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин Чăваш Республикинчи Управленийĕ тăратнă.

Раççейре

## Январьтен мар, июльтен

РФ Правительстви çитес çул газ 15 процент, электричествăпа ăшă инфляци виçи чухлĕ хакланасси пирки пĕлтернĕ. Прогнозсем тăрăх инфляци 2012 çулта 6 процента танлашмалла.

Палăртма кăмăллă самант, çитес çул тарифсем январĕн 1-мĕшĕнчен мар, июлĕн 1-мĕшĕнчен ӳсеççĕ. Малаллахи çулсенче те çапла пулать тесе çирĕплетеççĕ.

Çулла хаксене хăпартни граждансемшĕн лайăхрах. Мĕншĕн тесен çулла электричествăпа, ăшăпа усă курасси чакать.

2012 çулхи январь – июнь уйăхĕсенче кăçалхи хаксемпе тӳлемелле пуласси пирки калаççĕ.

## «Çуллахи» вăхăтпах пурăнăпăр

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче Раççей Правительство постановленийĕ вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн Раççей территорийĕнче сехет зонисем 9 пулаççĕ, «хĕллехи» вăхăт çине куçасси пăрахăçланать.

Ку вăл çавна пĕлтерет. Октябрь уйăхĕн юлашки вырсарни кунĕнче пирĕн малашне сехет йĕпписене пĕр сехет каялла куçармалла мар. Ир енĕпе ытларах сывăрас текенсен те çакăнпа çырлахмалла пулать. Кăçалхи çуркуннерен тытăнса Раççейĕн пур территорийĕнче те çуллалăкĕпех «çуллахи» вăхăтпа кăна усă курĕç.

Хаксем

## Ăçта йӳнĕрех?

**РАЙОНТА ВЫРНАÇНĂ СУТУ-ИЛӲ ТОЧКИСЕНЧЕ (ЛАВККА ТАТА ПАСАР) СЕНТЯБРĔН 6-МĔШĔ ТĔЛНЕ СОЦИАЛЛĂ ПĔЛТЕРĔШЛĔ АПАТ-ÇИМĔÇ ТАВАРĔСЕН ХАКĔСЕНЕ ТАНЛАШТАРСА КĂТАРТНИ**

**Колонкăсенче: 1.Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсем; 2. «Самообслуживание» лавкка; 3. «Продукты №1»; 4. «Визит»; 5.«Елена»; 6. Муркаш пасарĕ.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Сысна ашĕ | – | – | – | – | 160 |
| Чăх(тукмаксăр пуçне),кг | 99 | 99 | 110 | 105 | 100 |
| Шăнтнă пулă, кг | 69 | 68 | 65 | 60 | 55 |
| Услам çу, кг | – | – | 156 | – | 190 |
| Тип çу, кг | 60 | 62,5 | 54,9 | 59 | 65 |
| Сĕт, çу шайĕ 3,2 проц. пĕчĕк. кг | 27,5 | 29 | 30 | 30 | 30 |
| Çăмарта, 10 шт | 34 | 34 | 35 | 31 | 30 |
| Тăвар, кг | 6 | 7 | 7,9 | 7 | 6 |
| Тулă çăнăхĕ, кг | 11,5 | 16,5 | 14,5 | 20 | 15 |
| Рис, кг | 31 | 30 | 28 | 34 | 32 |
| Вир кĕрпи, кг | 45 | 45 | 30 | – | 46 |
| Хура тулă кĕрпи, кг | 82 | 82 | 77 | – | 75 |
| Вермишель, кг | 20 | 21 | 18 | 22,5 | 21 |
| Çĕр улми, кг | 11 | – | 16 | 9 | 15 |
| Шурă пуçлă купăста, кг | – | – | 4,5 | – | 5 |
| Пуçлă сухан, кг | 18 | – | 16 | 15 | 15 |
| Пан улми, кг | 55 | – | 35 | 55 | 50 |
| Кишĕр, кг | 16,2 | – | 20 | – | 20 |

Саламлатпăр



Пирĕн хисеплĕ те юратнă ĕçтеше – «Радуга» кафере вăй хуракан **Тамара Ивановна КОЛБАСОВĂНА** сумлă юбилейпа ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу пултăр ялан. Пурнăç çулĕ вăрăм та такăр килтĕр, чир-чĕр санран пăрăнса иртĕр. Телей çиргĕне ялан пĕрле çӳретĕр.

**Саламлаканĕсем: «Радуга» кафе коллективĕ.**



Юратнă аннене, кукама – Çармăçкасси ялĕнче пурăнакан **Лидия Петровна СЫТИНĂНА** 85 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Яланах сывлăхлă пулма сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр.

Саламласа сунатпăр ырлăх,
Çемьешĕн пултăр тарават,
85-ре те пултăр сывлăх,
100 çула ситме – хăват.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**

Хаклă мăшăра, аннене, хунямана, кукамая, мамака, тăхлачăна – Исетеркке ялĕнче пурăнакан **Мария Егоровна АЛЕКСЕЕВĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ялanах сывлăхлă, ăшă кăмăллă пул, кĕрекÿ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Малашне те мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе, пускилсемпе килĕштерсе, савăнса пурăнмалла пултăр. Сывлăху çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ, хăтилăхлачисем, тăванĕсем.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Кĕске çӳç пирки

– Çӳç çирĕплĕхĕ алюминипе танлашать.
– Çӳç талăксерен вăтамран 0,4 миллиметр ӳсет.
– Çитĕннĕ çыннăн кунсерен 200 çӳç пĕрчине яхăн тăкăнни йĕркеллĕ пулăм шутланать.

## Ĕçне туллин хакларĕç

Авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствипе вырăнти хăйтытăмлăх вырăнĕсен ...

Авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствипе выльăхсен ăратлăхĕпе ĕçлекен «Чувашское» уçă акционерлă общество ăратлă выльăхсемпе ĕçлекен Карачурапа пĕрлешӳре ăратлă выльăхсен куравне ирттерчĕç. Унта активлă хутшăнса Муркашсен делегацийĕ 19 медаль çĕнсе илме пултарчĕ. Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Ятманта пурăнакан Татьяна Викторовна Малова курав вĕçĕнче çĕнтерӳçĕсене чысланă вăхăтра сцена çине ултă хутчен тухрĕ: тăваттăшĕнче ылтăн медальшĕн, иккĕшĕнче – кĕмĕлшĕн.

– Паянхи йывăр вăхăтра та пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех килти хушма хуçалăха аталантаракансем те ăратлăхпа ĕçлес çула суйлани савăнтарать. Ăратлăхпа ĕçleme тăрăшнине ырлатăп кăна. Эпир çакна тума пултарни ял çыннисем ырă малашлăха шанса пурăнни пирки калать, – терĕ 1-мĕш вырăна тухнă илемлĕ кролика алăран вĕçертмесĕр Т. Малова.

Ăратлăх пĕрлешĕвĕн территорийĕнчи тирпейлĕ вырăнта йĕркеленĕ пĕчĕк пӳлĕмсенче-картасенче вырăн тупнă ăратлă ĕнесем, тынашкасем, лашасем, понисем, сысна амисемпе çурисем, канлĕ выртакан сысна аçисем, сурăхсемпе качакасем, пыл хурчĕсемпе хурсем, фазансемпе кăрккасем хушшинче Татьяна Викторовнăн килти хушма хуçалăхĕнчи илемлĕ кроликĕсем, цесарккисем, мускус кăвакалĕсемпе декоративлă чăххисем, путенисем иртен-çӳренсене кашниех хăйсен тĕлĕнче тытса чарчĕç. Вĕсен хуçи вара пур ăратă пирки те каласа тата вĕсенчен мĕнле, мĕн чухлĕ продукци туса илме май пуррине, аталану çулĕсене шăкăл-шăкăл каласа ăнлантарса панĕ, хăйĕнне çыхăну тытма йыхравларĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

### Пултаруллă ентешсем





**Сăн ӳкерчĕкре: Татьяна Викторовна Малова ывăлĕпе ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕнчен Л. Г. Николаевран черетлĕ диплом илнĕ хыççăн.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

### Усăллă çимĕç

## Сырлан

Юлашки вăхăтра ăна чылайăшĕ ӳстерме тăрăшать. Çак ӳсен-тăранăн пĕрпĕрин çумне çыпăçнă сап-сарă çырлисем туратсене сырса илнĕ. Çавăнпа та ăна сырлан теççĕ. Сырлан вĕтлĕх пек, хăш чухне вăрăм йывăç пек туратланса ӳсет. Турачĕсем çинче тирекен йĕпсем пур. Вăл улма-çырла йывăçĕсенчен уйрăлса тăрать. Унăн ама чечеклĕ йывăç пулать тата аçа чечекли. Çимĕç вара ама йывăç çинче кăна ӳсет. Вĕсене шăркалантарма кашни 8 – 10 ама йывăç çывăхне пĕр аçа йывăç лартмалла. Сирĕн пахчара ӳссе çитнĕ 1 – 2 ама йывăç çеç ӳсет пулсан çуркунне вĕсен турачĕ çине аçа йывăç турачĕсем касса сыпăр. Сырлан чечекĕсем çилпе шăркаланаççĕ. Ӳссе çитнĕ кашни йывăçран 6 – 8 килограмм чухлĕ е ытларах та çырла пухса илме пулать.

Пиçсе çитнĕ çырла питĕ çемçе, татнă чухне вара çурăлса юхать. Çавăнпа та сад ăстисем вĕсене пирвайхи тăм ӳкнĕ хыççăн кăшт хытсан татаççĕ.

Сырланран тĕрлĕ апат-çимĕç хатĕрлеççĕ. Килте унран кĕсел, сĕткен, повидло, джем, сироп хатĕрлеме пулать. Шăнтнă çырлана хĕл каçипех упрама пулать, ун пек чухне унăн тутлăхлă пахалăхĕ пачах та чакмасть.

Унта А, С тата ытти витаминсем чылай. Медицинăра сырлан çырлипе, вăрлăхĕпе юн тымарĕн, пыршă шыççин тата ытти чылай чир-чĕре сиплеççĕ, вăрлăхран хатĕрленĕ çупа ӳт-тир пиçсен тата тăм тивсен сипленĕ чухне усă кураççĕ.

Çак культура хăйăрлă кăпăш тăпраллă вырăнта аван ӳсет, айлăм тата нӳрĕк вырăна вара кăмăлламасть.

### Çĕнĕ сăвă

## Мăкăнь чечек

*А. Варна артисткăна халаллатăп*

Сцена çине эс тухсан
Шур акăш пек ырăнан.
Шăнкăр-шăнкăр сассупа
Халăха савăнтаран.

Мăкăнь чечек сан сăну,
Илĕртсе тăрать куллу.
Яштак хурăн сан пĕвӳ,
Шăнкăртатать шӳлкемӳ.

Чĕвĕл чĕкеç чĕлхипе,
Шăпчăк кайăк сассипе
Юрларăн эс ачаран,
Мĕн артиста çитиччен.

Артист ĕçĕ çăмăл мар,
Кулянма та кирлĕ мар.
Шанса хăв хастарлăхна
Ĕмĕр юрла савăнса.

**Р. СОЛОВЬЕВА.**
Çатракасси ялĕ.

### Сăмах – сывлăх хуралçине

## Илемлĕх пиркиех калаçар-ха

**(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерте).**

Паянхи калаçăва ваттисен сăмахĕнчен пуçлам. «Темĕнле тунсăх пуссан та кулма ан пăрах, мĕншĕн тесен сан кулluna юратакан та пулĕ», – тенĕ ырăнхи куна шанса пурăннă пĕр ăсчах. Сăн-питрен йăл кулă ан кайтăр тесен – вăл пирĕн илемлĕх палли – кун йĕркине çирĕп пăхăнса пымалла. Иртнĕ кăларăмра эпир сирĕнпе биоритмсене палăртасси пирки калаçнăччĕ.

Илемлĕ пулассин иккĕмĕш утăмĕ – çывăрма вăхăт тупасси. Пирĕнтен кашнийĕнех талăкра 8 сехетрен кая мар çывăрмалла. Медицинăра, паллах, этем 6 сехетре туллин çывăрса тăни пирки тата 10 сехет çывăрсан та канса çитерейменни çинчен çырса кăтартнă тĕслĕхсем пур. Манса ан кайăр, 8–9 сехет вăл – вăтам кăтарту. Пирĕнтен чылайăшĕ сахалрах çывăрас та ытларах усăллă ĕçсем тăвас тесе çывăрмалли вăхăта кану кунĕсене хăварaççĕ-куçараççĕ. Тĕпчевсем вара çакна çирĕплетеççĕ. Кану кунĕсенче эпир талăкĕпе çывăрсан та организмăн хӳтĕлев вăйĕсене туллин тавăрма пултараймастпăр. Ыйхă çителĕксĕрри иммунитета хавшатать, пит сăнне япăхтарать, кĕлетке йывăрăшне хушать. Ыйхă вăхăтĕнче гормон ылмашăвĕ пулса иртет. Çакна шута илсен каçхи ыйхă – йăрăс пӳллĕ пулассин тĕп элеменчĕ. Ансатрах каласан – çывăрса тăранман çын организмĕ хăйне кирлĕ энергие апат-çимĕç калорилĕхне ӳстернипе саплаштарма тăрăшать. Ытлашши калорисем вара паян е ыран кĕлетке йывăрăшне ӳстереççĕ.

Илемлĕхĕн виççĕмĕш утăмĕ – физкультура активлăхĕ. Медицина нормипе çирĕп сывлăх валли талăксерен пĕр сехет физкультура активлăхĕ кирлĕ. Çак активлăх шутне çуран утни, тĕрлĕ упражненисем туни, кил-çурт пуçтарни кĕреççĕ. Йăрăс пӳллĕ пулма, апатланура хăш-пĕр çăмăллăхсем тума вара талăксерен виçĕ сехет тĕллевлĕ физкультура упражненийĕсем туни вырăнлă. Пĕр харăс 3 сехет уйăрма кансĕр пулсан çак вăхăта ултă хутчен çуршар сехет интенсивлă физкультура тунипе те ылмаштарма пулать. Çав упражненисем кĕлеткене йăрăс тытма, илемлĕ пулма пулăшаççĕ те.

Çуран чупни, велосипедпа ярăнни, шывра ишни, çуран утни, аэробикăна çӳрени – ытлашши çусене естественлă çунтармалли мелсем.

Тăваттăмĕш утăм – кăнтăрла канни.

Кирек епле ĕçре те кану вăхăчĕсем пулаççĕ. Хăвăра илемлĕ туяс тесен вăхăтран вăхăта «ĕçрен пăрăнмалла», стрессран хăтăлмалла. Кĕске канусем ĕçлеслĕхе ӳстереççĕ çеç. Çавăнпа та тĕп ĕç вăхăтĕнче пачах урăххипе «аппаланса илессине» те кун йĕркине кĕртĕр. Офисра ĕçлекенсене, тĕслĕхрен, компьютер патĕнчен уйрăлса пĕр вăхăт усă сывлăшра уçăлса çӳрени вырăнлăрах та.

Кану кунĕсенче те канăва килти ĕçсемпе çеç («çăварлăхласа») ан лартăр. Килтисемпе канашласа унта е кунта тухса çӳрессине йăлана кĕртĕр.

Пиллĕкмĕш утăм – рационаллă апатлану. Нумай хĕрарăм диета тытать. Анчах ку çул тĕрĕс мар стратеги. Тĕрĕс апатланни, харпăр хăйне ытлашши калорисемпе «тиесе лартманни» – рационаллă апатланăвăн тĕп никĕсĕ. Пирĕн организма белоксем те, çусем те, углеводсемпе витаминсем те, минераллă веществосем те çителĕклĕ кирлĕ. Сывă çыннăн хырăм выççине пĕлсех тăмалла. Кунта сывă апатланăвăн тĕп принципĕсем çинче чарăнса тăрас килет.

1. Апат çителĕклĕ пултăр, анчах нумай мар.
2. Рационра белок çителĕклĕ пулни авăн. Çакна валли пĕр порци аш е пулă тата 2–3 порци сĕт продукчĕ кирлĕ.
3. Кунне 5–6 чĕрĕ пахча çимĕç çимелле.
4. Полуфабрикатсене апатланура эрнере 3 хутчен усă курма юрать.
5. Газировкăсем ан ĕçĕр.
6. Шарителнĕ апата эрнере 2–3 порци çиме юрать.
7. Алкоголь ĕçессине контроллемелле.
8. Апатланассине кану вăхăтне çавăрмалла мар.

Тулăх апатлану, çителĕклĕ ыйхă, лайăх нерва системи – телейлĕ пурнăç никĕсĕ.

**(Малалли пулать).**

**Л. ИВАНОВА,**
**врач-психотерапевт.**

### Ыран – Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен кунĕ

## «Вăрманта – эпĕ килте»



«Вăрман вăл – халăх пуянлăхĕ. Пĕрлехи пуянлăха вара упрама пĕлесчĕ», – пуçларĕ чей чашăкне умнерех шутарса вăрман хуçалăхĕн ветеранĕ Семен Николаевич Николаев.

1931 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче Çатракасси ял тăрăхĕнчи Торинкасси ялĕнче çуралнă арçыннăн пĕтĕм ĕмĕрĕ вăрманпа çыхăннă. Унăн ашшĕ – пĕрремĕш тĕнче вăрçин участникĕ – мирлĕ вăхăтра ĕмĕрĕпех вăрман хуçалăхĕнче вăй хунă. Иванпа Çумккана та ачаранах вăрмана юратма хăнăхтарса ӳстернĕ. Пиччĕшĕ хăйĕн ĕç ĕмĕрне вăрманпа çыхăнтарман пулсан та Çумкка хăйĕн пурнăçне вăрмансăр курайман. Çамрăкла районти çыхăну уйрăмĕнче ĕçленĕскер Совет çарĕнче службăра пулса таврăнсан ашшĕн ĕçне хăй аллине илсе 40 çул Муркаш районĕнчи вăрман хуçалăхне панă. Семен Николаевич паян: «Вăрманта – эпĕ килте», – тени ватă вăрманçăна тӳрремĕнех пырса тивет. Мĕншĕн тесен 1948 çулта ашшĕпе амăшĕ Çĕньял Хуракасси патĕнчи вăрмана тухса килçурт çавăрсан вĕсен малаллахи пурнăçĕ йăлтах вăрманта иртнĕ.

Ыран – Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен кунĕ. Мĕнле шухăш-кăмăлпа кĕтсе илет-ха хăйсен профессиллĕ уявне вăрман ĕçĕн ветеранĕ?

– Вăрманçă пурнăçлакан ĕç районшăн та, республикăшăн та, Раççейшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хамăра шаннă ĕçе эпир ответлăха туйса пурнăçланă. Ĕçĕмĕре вăрман Кодексĕпе килĕшӳллĕн йĕркелесе пынă, вăрманпа усă куракансем саккунсене пăхăнса тăнине тĕплĕн тĕрĕсленĕ. Хамăра йĕрке хуралçисем, пушар хуралĕнче вăй хуракансем, массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсем пулăшнăран вăрманти йĕркелĕхе тивĕçлĕ шайра тытма май пулнă. Ку вăл малашне те çаплах пуласси пирки эпĕ иккĕленместĕп, – терĕ калаçма юратакан арçын пĕрле ĕçленисене тата паян та вăрман аталанăвĕшĕн тимлекенсене уявпа саламланă май.

Вăрман хуçалăхĕнчи тĕрлĕ ответлă ĕççенче вăй хунă ентешĕмĕр тăрăшнипе 40 çул хушшинче Элĕк районĕнчи Шĕмшеш ялĕнчен Шупашкар районĕнчи Янăша çити 84,4 гектар çинче йывăç лартса хăварнă. Паян çав йывăççем çине пăхсан çĕлĕк хăвăнса ӳкет. Тăватă çул каялла Малиновка тата Ильинка лесничествисем пĕрлешсе пысăкланнă хыççăн çĕнĕ лесничество халĕ 10316 гектар çинчи вăрмансене пĕрлештерет. Хамăр калаçăва килти хушма хуçалăх çине пăрса ярсан Семен Николаевич ман ума вăрманçă пек мар, пысăк опытлă кăмпаçă пек тухса тăчĕ. Унăн сĕнĕвĕсем кăмпаçăсемшĕн усăллă пуласса шанса пичетлетпĕр.

Кăмпа татасси питĕ явапллă ĕç. Ăна малтанах тăварлă шыва ярса лартмалла, унта кăмпари хуртсем тухаççĕ. Хыççăн 3–4 хутчен çуса тăкмалла. Кăмпасем 4 категорие пайланаççĕ: 1-мĕшсем – шурă кăмпа (вĕсем пирĕн тăрăхра питĕ сахал); 2-мĕшсем – хурăн кăмпи, ăвăс кăмпи; 3-мĕшсем – хыр кăмпи, майра кăмпи, хĕрлĕ кăрăç т. ыт. те; 4-мĕшсем – така кăмпи. Пĕррехинче 12,7 кг таякан така кăмпи тупни паян та асра.

**1-мĕш канаш**

Хыр кăмпине, шĕшкĕ айĕнче ӳсекен кăмпана тасатаççĕ, анчах çумаççĕ. Вĕсене каткана хурса тăвар сапаççĕ. Пирпе витсе хытă пусăрăнтараççĕ. Пусăрăнтарнă хыççăнхи сĕткенĕн кăмпасене витмелле.

**2-мĕш канаш**

Хыр кăмписене, ут тутисене, кăрăççене, хурăн айсене, майра кăмпине малтан пĕçермесĕрех сивĕлле тăварлама пулать. 1–2 кун шывра тытмалла. Шывне кăшт тăвар хушмалла (1л шыв пуçне 10 г тăвар, 2 г лимон кислоти). Кайран вĕсене тĕпне тăвар сарнă пичкене ретĕнретĕн хумалла. Шĕлепкине аялалла туса 6 см хулăнăш хунă кашни рете тăвар сапмалла. Тулнă шăнăçа пирпе витмелле те пусăрăнтармалла.

**3-мĕш канаш**

Кастрюле 0,5 л шыв ярсан (1 кг кăмпа валли) тăвар хушмалла та вĕрилентерме лартмалла. Вĕрекен шыва кăмпа ямалла. 15–25 минут вĕретмелле. Пиçнĕ кăмпасене банкăсене куçарсан вĕсене кăмпа шывĕпе тултармалла. Кун пек чухне 1 кг пĕçернĕ кăмпа валли 2 апат кашăкĕ тăвар, 1 лавр çулçи, 3 шт. пăрăç, 3 шт. гвоздика, 5 г укроп, 2 хура хурлăхан çулçи кирлĕ.

**А. БЕЛОВ**
**калаçнă.**

Патшалăх пулăшăвĕ

# Врачсене – пĕрер миллион

Яллă вырăнсенче ĕçлес текен çамрăк врачсене пĕрер миллион тенкĕ памалла. Кун пирки РФ премьер-министрĕ В. Путин пĕлтернĕ.

Путин сăмахĕ тăрăх çак укçана тивĕçме çамрăк врачăн пĕр услови çеç йышăнмалла – ялти больницăра 5 çултан сахал мар ĕçлемелле. Тивĕçнĕ укçа-тенкĕне вара медицина ĕçченĕсем пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма е йăлари ыйтусене татса пама усă курма пултараççĕ.

Малтанласа палăртнă тăрăх ялти врачсене пулăшу кўрекен программăна 2012 çулхи январĕнче пурнăçа кĕртме пуçласшăн. Хальлĕхе программа миçе çуллăха тăсăлассине пĕлтермен, вăл пĕр çул хыççăн паллă пулассине калаççĕ.

**Хамăр инф.**

Çынлăха çухатнă

# Вĕренĕн вĕçĕ пурах

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Аслă сучĕ присяжнăй заседательсен коллегийĕн айăплав йышăнăвĕпе никĕслесе Шурчара пурăнакан пĕр çамрăк тĕлĕшпе приговор кăларчĕ.

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче присяжнăй заседательсен коллегийĕ çак çамрăк тĕрлĕ йышши преступленисем тунине çирĕплетнине йышăннă. Хĕллехи каçсенче Муркаш урамĕсенче хĕрарăмсене хăратса вĕсен сумкисене вăрланине хаçатра маларах пĕлтернĕччĕ. Çак ĕçсене шăпах Шурча каччи пурнăçланă та.

Муркашра хăй хыççăн йĕр хăварнăскер Шупашкарта татах та тискертерех ĕç тунă. Февралĕн 8-мĕшĕнче вăл тĕп хулари обществăлла мунча патне каякан çуран çўремелли çул çинче пĕр кинемее питĕнчен, мăйĕнчен тата кăкăр тавраşĕнчен 10 хутчен çĕçĕпе тирет. Ватă хĕрарăм вырăнтах вилсе каять. Çынлăха çухатнă каччă вара кинемейĕн япалисене тата 700 тенкĕ укçине вăрласа тарать.

Тепĕр тăватă кунран Ярапайкассинче пурăнакан ватă арçынна леш тĕнчене ăсатать. Малтан çапса-тапса пĕтерет, хыççăн мăйĕнчен кĕпе-йĕм çакмалли вĕренпе пăвса вĕлерет. Килтен 400 тенкĕ тата пĕр кĕленче эрех илсе тухса каять.

Çапла вара присяжнăйсен йышăнăвне шута хурса суд Шурча каччине пĕтĕмĕшле 20 çуллăх çирĕп режимлă юсав колонине ярса ирĕкрен хăтарма, икĕ çуллăх ирĕке чакарма йышăнать.

**Пичете ЧР прокуратурин пресс-службин материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Полици хроникинчен

# Алăра çĕçĕ

Урлă-пирлĕ сăмах тухсанах алла çĕçĕ тытма хăтланаççĕ, тимĕр тăсăлма тата хирĕçÿ ытла шала кĕме пултарасса та тĕшмĕртмеççĕ-ши хирĕçекенсем?

Акă Тивĕш ялĕнчи пĕр арçын арăмĕпе харкашаканскер ним шутласа тăмасăр алла çĕçĕ тытать, хĕрарăм аллине касать. Çапла вара суранланнăскерĕн медицина ĕçченĕсем патне пулăшу ыйтма кайма тивет. Халĕ вара ку синкер ĕç тĕлĕшпе йĕрке хуралçисем тимлеççĕ, РФ УК 116 статйин 1 пайĕпе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

# Капла та пулать

Муркаш салинчи 13 номерлĕ аптекăра ирех пĕр хирĕçÿ пулса иртет. Ответлă ĕçчен-хĕрарăм аптека çуртĕнчи тепĕр хĕрарăмпа темĕнле сăлтава пула кăмăлсăр пулать. Ответли хăйне пысăкрах çын пек туйса-ши теприне икĕ хутчен çапать тата тапать. Çакăн пек хăтлану РФ УК 116 статйин 1 пайĕпе йĕркене пăсни пулать.

# «Мак» операци ăнăçлă ĕçлет

«Мак» операцие ирттерекенсем пур çĕре те çитсе тĕрĕслев ирттерме тăрăшаççĕ, черетлĕ тĕрĕслевре полици ĕçченĕсем Мăн Сĕнтĕр салинче пулнă. Вĕсем парк патĕнче хăйсене иккĕлентерекен çынна асăрханă. Çамрăк арçын хăйĕнпе пĕрле мăкăнь евĕр ўсен-тăран илнĕ. Полици ĕçченĕсем туртса илнĕ япалана тĕпчев ирттерме тивĕçлĕ çĕре ăсатнă.

Çавăн пекех çак операцие ирттерекен ĕçченсем Нискасси ялĕнчи обществăлла транспорт чарăнăвĕнче Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан тепĕр çамрăк çынна тытса чараççĕ. Ун çумĕнче та çавăн йышши ўсен-тăран пулнă, ăна та экспертизăна ăсатнă.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Çамрăксене пĕлме

# Пултаруллисене стипенди кĕтет

Чăваш Республикин Президенчĕн йышăнăвĕпе килĕшўллĕн пултарулăхпа уйрăмах палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене – 14 çул тултарнисенчен пуçласа 30 çулчченхисене – ятарлă стипенди парса чысласси ырă йăлара.

Çак стипендие илес текенсем хушшинче вĕренўре ăнăçлă ĕлкĕрсе пыракансем, бизнес-проект хатĕрлессипе, наука, пултарулăх, производство, ертсе пырас ĕç енĕпе çитĕнў тăвакансем пулма пултараççĕ.

Пирĕн район та хастар çамрăксемсĕр мар. Çавăнпа та октябрĕн 1-мĕшĕччен пур предприятисемпе организацисен, учрежденисен тата тĕрлĕ органсен хăйсен коллективĕсенчен президент стипендине тивĕçме пултаракан çамрăксен кандидатурăсене тăратма май пур. Çакна валли ятарлă документсем хатĕрлемелле. Кун пирки тĕплĕнрех район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче пĕлме пултаратăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


для пайщиков *предъявителю объявления +1% по сбережениям*

СБЕРЕЖЕНИЯ

• новые выгодные условия (частичное снятие, пополнение сбережений)
• пенсионерам - льготы

ЗАЙМЫ ЛЬГОТНЫЕ

• на покупку КРС - до 30 000 рублей
• на обучение - до 15 000 рублей
• на покупку и строительство жилья под материнский капитал
• срок пользования займом на покупку а\м увеличен до трех лет

КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
Отделение № 3, с.Моргауши
ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru
62-6-86
8-919-673-42-19

**Срочно продаю жилой бревенчатый дом с газовым отоплением и хозяйственными постройками, плодоносящий сад 40 соток в д. Мемеккасы Моргаушского района. Цена договорная. Тел.: 8-905-027-70-87. 1-2.**

КУПЛЮ ПУХ, ПЕРО
новые и старые, мешаные перины и подушки с выездом на дом.
Куриное не предлагать.
Тел.: 8-962-561-81-15. Иван.

БЕТОН, РАСТВОР любых марок.
Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.
Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.
Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 33-50.

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы,грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30.
З/п от 25000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 2-5.

ЗАКУПАЕМ ОПТОМ МОЛОКО
ОТ 500 КГ.
ТЕЛ.: 8-927-844-99-19.


* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:080401:252, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с.Юнга, для строительства сарая, площадью 75 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.




## Прогноз погоды

| | суббота 17 сентября | | | | воскресенье 18 сентября | | | | понедельник 19 сентября | | | | вторник 20 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +9 | +12 | +15 | +11 | +9 | +11 | +13 | +11 | +8 | +11 | +13 | +9 | +7 | +9 | +11 | +8 |
| Давление мм | 741 | 741 | 741 | 741 | 741 | 742 | 744 | 746 | 747 | 749 | 749 | 750 | 750 | 750 | 749 | 749 |
| Влажность % | 91 | 75 | 56 | 86 | 92 | 91 | 69 | 82 | 89 | 81 | 57 | 87 | 93 | 86 | 61 | 79 |
| Ветер | З | Ю-З | З | Ю-З | З | З | С-З | С-З | С | С-З | С | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З |
| м/сек | 2 | 5 | 3 | 2 | 1 | 4 | 4 | 3 | 1 | 2 | 4 | 2 | 2 | 4 | 4 | 2 |
| Солнце восход/заход | | 06:27 | 19:07 | | | 06:29 | 19:04 | | | 06:31 | 19:01 | | | 06:33 | 18:59 | |
| Луна восход/заход | | 20:10 | 12:17 | | | 20:44 | 13:23 | | | 21:28 | 14:22 | | | 22:24 | 15:12 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

Пĕлтерўсем. Объявления


Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-5.

Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки.
Тел.: 8-927-668-70-15. 3-13.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-9.



ОКОННЫЕ СИСТЕМЫ ENWIN
ОКНА от 10500 рублей под ключ.
Замер. Доставка бесплатно.
Тел.: 37-55-39, 8-927-667-55-39.


Виççĕ пăрулана хура тĕслĕ ĕне сутатпăр.
Тел.: 60-0-34.

* * *

Покупаю корову, бычка, телку в живом виде.
Тел.: 8-905-029-61-39. 1-5.

* * *

Куплю корову, бычка, телку, овец.
Тел.: 8-905-342-39-43. 8-10.

* * *

Продаем комбикорма, зерно. Тел.: 89278435240. 4-5.

* * *

Ремонт бытовых холодильников на дому. Гарантия, качество. Тел.: 8-905-199-83-87, 62-0-45. 3-5.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник.
Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 5-5.

* * *

Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит.
Тел.: 8-905-340-07-78. 2-5.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус, цемент, шифер, профнастил (крашеный, оцинкованный). Обращаться: «Рука мастера», с. Моргауши и д. Калайкасы. Тел.: 8-903-346-40-58. 4-5.

* * *

Срочно куплю дом на материнский капитал.
Тел.: 8-917-067-11-49.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 4-8.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Услуги экскаватора.
Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 3-5.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57. 3-5.

* * *

Хаклă хакпа вăкăр, тына, ĕне чĕрĕ виçепе тата ашпа туянатăп. Тел.: 8-905-343-46-23. 1-5.

* * *

Продаю для трактора БДТ-3 культиватор пропашной (навесной), сцепка борон. Тел.: 8-927-999-39-00.

* * *

Продается деревянный жилой дом с приусадебным хозяйством 40 соток. Продается деревянный дом на самовывоз в д. Кашмаши. Тел.: 8-961-340-81-47.

* * *

Продаю дойных коз и козлят.
Тел.: 8-905-027-97-19.

* * *

Открылся офис Страхового дома ВСК (Всероссийская страховая компания) с предоставлением страхования автотранспорта, имущества, здоровья, жизни, ипотеки, животных по адресу: с.Моргауши, ул.Мира, д.6 (здание ПОЧТЫ, вход со стороны здания суда). Узнай стоимость своего полиса ОСАГО по телефону: 8-902-661-29-66 (круглосуточно).

* * *

Требуются рабочие для сборки корпусной мебели в «Декор-мебель». Тел.: 62-6-60, 8-905-343-08-10. 1-2.

* * *

Организации требуются швеи.
Тел.: 8(83541)62-5-44. 1-2.

Муркаш райпо коллективĕ кунта нумай çул хушши закройщицăра ĕçлекен Ф.А. Григорьевăн юратнă

**МĂШĂРĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле пĕтĕм чун-чĕререн тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

«Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн коллективĕ кунта ĕçлекен Л. Ефремовăн тăванĕ

**Степан Фронтасьевич НИКИТИН**

сарăмсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Коллектив ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» глубоко скорбит по поводу кончины работника предприятия, оператора птицефабрик и механизированных ферм

**КРАСНОВА Сергея Владимировича**

и выражает искреннее соболезнование родным и близким покойного.


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 16.09.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.